Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | N23 (4592) | *1998 çулхи февраль (нарăс) уйăхĕн 27-мĕшĕ, эрнекун* | *Палăртнă хакпа.*

## М.Ш.Шаймиев:

## “Çĕре сутма-туянма ирĕк пулмасан, унпа малашне йĕркеллĕ усă курасса шанăç та çук”

Шел пулин те, тенĕ вăл тухса калаçса, патшалăхăн тĕп пуянлăхĕпе - çĕрпе тухăçлă усă курма тăрăшни - юлашки 80 çулта ним патне те илсе пымарĕ. Пĕлтĕр Тутарстанта эпир кашни гектартан 37-шер центнер ытла тырă çапса, пурĕ 6,3 миллион тонна тухăç пухса илнĕ. Сăвăм пысăках мар пулин те, çапах та пĕр ĕне пуçне 3-шер пин килограмм ытла сĕт суса илеççĕ. Анчах пире хамăрăн ĕç итогĕсем те, малашлăх та çырлахтармасть. Тухăç аван, анчах пысăк савăнăç çук, мĕншĕн тесен хуçа пулманнипе тăкаксене хирĕçле механизмран пăрăнаймастпăр. Тухăçлăхпа продуктивлăха малашне ÿстерме тăрăшни адекватлă мар тăкаксем кăларасси патне илсе пырĕ.

Танлаштаруллă тишкерÿ иртттернĕ республикăра хуçалăха тытса пырассин тĕрлĕ шайне палăртать. Çапла, пĕтĕмлетсе калама пулать: çĕре уйрăм харпăрлăха памасан, ăна сутма-туянма ирĕк пулмасан, унпа малашне йĕркеллĕ усă курасса шанăç та çук.

***<u>Февралĕн 18-мĕшĕнче Раççейĕн Федераллă Пухăвĕн Федераци Канашĕ хăйĕн черетлĕ ларăвĕнче çĕршывăн Çĕр кодексне сÿтсе явнă. Ăна сÿтсе явассине пирĕн республика Президенчĕ М.Ш.ШАЙМИЕВ хутшăннă.</u>***

Эпир хамăрăн республикăра Çĕр кодексне иккĕмĕш вулавра республика Конституцийĕпе килĕшÿллĕн йышăнтăмăр, вăл çĕре уйрăм харпăрлăха пама ирĕк парать. Кодекса пĕтĕмпех йышăнасса эпĕ те иккĕленместĕп, тесе палăртнă М.Ш.Шаймиев.

Тĕрĕс, пирĕн патра, ытти крайсемпе облаçсенчи пекех, çак ыйту çине тĕрлĕрен пăхаççĕ. Анчах пĕр саслăн йышăнасса кĕтни реформăсене иртерме чăрмантарĕ. Çĕре уйрăм харпăрлăха парассине хирĕçлекенсем çынсене çĕре сутма хистетпĕр тесе хăратса, халăх менталитечĕпе чее усă кураççĕ. Эпĕ калатăп: эпир сире çĕр патăмăр, эсир унăн хуçисем. Тархасшăн, унпа тĕллевлĕ усă курăр, пире ку савăнтарать кăна, эсир унпа лайăх усă куратăр пулсан, ăна никама та сутмастăр та. Эпир çĕр харпăрçине хăйĕн прависемпе туллин усă курма май паратпăр.

Патшалăха пĕлсе тытса пымалла. Пирĕн Тутарстанта çавăн пек. Малтанхи колхоз е совхоз çĕрĕсене çынсене, çав шутра ялти интеллигенцие уйăрса панă. Спекуляци ан пултăр тесе çĕре ял çынни çак ялта пурăнакана сутма пултарать. Çĕре ялтах илес текенсем пулмасан, ăна ятарласа йĕркеленĕ уполномоченнăй орган сутăн илме пултарать. Вăлах çак çĕре çĕр пайне ÿстерес тĕлĕшпе каялла пама та пултарать. Ял хуçалăх усă куракан çĕрсен пирĕн 4 миллион ытла гектар, вĕсенчен 1 миллион гектарне эпир патшалăх запасне хăвартăмăр. Çак запаса кашни колхозран, совхозран уйăрса илнĕ. Çакăнпа эпир мĕн те пулсан çухататпăр-им?

Халĕ республикăра çĕре ют çĕршыври уйрăм тата юридически çынсене патшалăхăн резерв фончĕ шутĕнчен (кунта Тутарстан Республикин правительствин фончĕ) сутма май пуррине пăхса тухаççĕ. Унăн тĕллевĕ - конкуренци тăвасси. Çапла вара, хăйсен харпăр çĕрĕсем çинче ĕçлекен çынсемпе юнашар ăна сутăн илнисем те вăй хума пултарĕччĕç. Çакăнтан мĕншĕн хăрамалла?

Ялсенчи вырăнти самоуправленисен тупăшсен пĕртен-пĕр çăлкуçĕ вăл - çĕр. Ял хуçалăхне тавар туса кăларма пулăшса пирĕн хушма бюджет укçине уйăрса пама тивет. Çакна йăлтах пăрахăçлама çук, çапах та çĕр çинче хуçа, çĕрпе усă куракан харпăрçăсем, ăна сутма тата туянма ирĕк пулмасан, нимĕнле йĕркеллĕ самоуправлени те пулма пултараймасть. Ку çул вăрăм мар, палăртрĕ М.Ш.Шаймиев.

Юлашкинчен, тавлашуллă, çапах çĕршывшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтусене сÿтсе явса, маларах тунă договорсене палăртса, Тутарстан Республикин пуçлăхĕ çапла каларĕ: “Мускавра çĕр ыйтăвне сÿтсе явас тĕлĕшпе йĕркеленĕ “çавра сĕтеле” Раççей Президенчĕ, Федераци канашĕ, Патшалăх Думи тата Правительство хутшăнчĕç. Çак ыйтăва татса парас тĕлĕшпе çул-йĕр тупма калаçса татăлтăмăр. Сĕнекен Кодекса паян йышăнсан, Раççейре кăткăс политика ларутăрăвĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ урăх ыйтусем татса парасса та шанăç пур.”

**("Республика Татарстан" хаçатран, 1998 çулхи февралĕн 21-мĕшĕ).**

## Декларацилессине ан тăсăр

Бюджетăн тупăш пайне пурнăçлани бюджетниксене ĕç укçи, ватăсене пенси тÿлемелли тĕп услови пулса тăнине шута илсен, граждансем хăйсен тупăшĕ çинчен декларацисем тăратасси пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнланмалла.

Предпринимательсем палăртнă 476 уйрăм çынран 102-шĕ налук инспекцине пĕлтĕрхи çул тупăшсем çинчен декларацисене тăратнă, çапах та декларацисене тăратма панă вăхăтăн çурри иртсе кайнине шута илсен, çак шут пысăках мар пулни курăнать. Декларацисем тăратма тивĕç тепĕр ушкăнран уйăх çурă хушшинче инспекцие пиллĕкĕн çеç килнĕ, вăхăчĕ вара хăвăрт иртет тата декларацисене çырнине те тĕрĕслемелле. Çакна шута илсе, налук инспекцийĕ декларацисене шăматкун та йышăнма шутланă. Налук илекенсем çак кун хăнăхнă режимпа ĕçлеççĕ, çавăнпа та ытти кун килме май çук пулсан, шăматкун йышăнаççĕ.

Мĕнле пулсан та çак ĕçе юлашки куна, апрелĕн 1-мĕшне, хăвармалла мар.

## “...Пире çакăн пек тĕлпулусем кирлĕ”

Февралĕн 23-мĕшĕнче, Тăван çĕршыва хÿтĕлекенсен уявне район администрацийĕн çамрăксемпе ĕçлекен пайĕ Чечняра службăра тăнă салтаксене тĕлпулăва пуçтарчĕ. Тĕлпулу Çамрăксен çуртĕнче иртрĕ, унта районти çар комиссариачĕн представителĕ, хăй те Чечня вăрçине хутшăннă Марат Абдрахманов, афганецсен Союзĕн территорири уйрăмĕн председателĕ Виль Мусин хутшăнчĕç. Уяв саламĕсенче пĕр тĕп шухăш палăрчĕ: “Тÿпе пирĕншĕн яланах çутă пултăр, ытти ăрусем вăрçă мĕнне, унăн хуйхи-суйхине нихăçан ан пĕлччĕр”. Виль Мусин çак тĕлпулура Чечня вăрçине хутшăннă яшсене ĕçлĕ сĕнÿ пачĕ: афганецсенчен тĕслĕх илсе вĕсен те пĕрлешмелле, хальхи кăткăс пурнăçри йывăрлăхсене пĕрле чăтса иртермелле. Ку енĕпе афганецсен Союзĕ “чеченецсене” пулăшма хатĕр. Çаплах ĕнерхи салтаксене администрацири çамрăксен пайĕн заведующийĕ Ралия Ханиева ăшшăн саламласа парнесем пачĕ. Унтан вара çамрăксен пайĕ çумĕнче йĕркеленĕ интеллектуалла “Юникс” клуб салтаксене музыка композицийĕ кăтартрĕ. Юлашки çулсенче (комсомол вăхăчĕсем хыççăн) кун пек мероприяти Нурлатра пĕрремĕш хут пулнине те палăртса хăвармалла, çавăнпа та вăл пуриншĕн те усăллă иртрĕ. Уяв пайĕ хыççăн яшсем хăйсен ăшă калаçуне чей ĕçме хатĕрленĕ сĕтелсем хушшинче малалла тăсрĕç.



Иртттернĕ каçшăн тав туса çамрăксем çапла каларĕç: “Эпир пĕр-пĕринпе тĕл пулни, паллашни те теме тăрать. Тĕл пулма пирĕн урăх майсем те çук, çакăн пек тĕлпулусем вара питĕ кирлĕ”...

Яшсем тĕлпулу хыççăн уйрăлнă чух пĕр-пĕринпе çыхăну тытма, кирлĕ пулсан пулăшма сăмах пачĕç.

## *Спорт вăл - пурнăç*

Çак кунсенче НГДУ-ри спорта юратакансем “Татнефть” акционер обществи йĕркеленĕ VIII спартакиадăна хутшăнаççĕ. 50 ытла нефтяник çирĕм тĕрлĕ ăмăртусенче вăй виçеççĕ. Сĕтел çинчи теннис, шахмат, минифутбол, бильярд, волейбол ăмăртăвĕсем иртнĕ ĕнтĕ.

- Спорт çынсене чăнчăн савăнăç кÿрет, - тет спартакиадăна хатĕрлекен, бассейн директорĕ В.Киселев. - Сăмахран, Шариф Шайдуллина илер. Ватлăха пăхмасăр (вăл 73 çулта ĕнтĕ), вăл бильярдла питĕ лайăх вылять тата спартакиадăна кăмăллпах хутшăнать. Шывра ишме хатĕрленнĕ спортсменсем çуккине пăхмасăр, çакăн йышши спорт ăмăртăвĕсене коллектив кăçал пĕрремĕш хут хутшăнать. Нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управленин кăçалхи спартакиадин эмблеми нефтяниксен бассейнĕ шутланать. Çак кунсенче управленин художество лабораторийĕ ăна туса хатĕрлеме тытăннă. Маларахри çулсенче вĕсен делегацийĕн машини çинче Гоголь произведенийĕнчи вырăс халăх халапĕсенчи сăнарсем пулнă пулсан, халь вара бассейна илемлĕн ÿкерни пулĕ.

## Тараватлă тивĕçтереççĕ

"Чулпан" магазин патĕнче Нурлатри çăкăр завочĕн сенкер вагончикĕ, акă темиçе кун ĕнтĕ тавар туянакансене тараватлăн кĕтсе илет. Халь кунта ирхине 7 сехетрен тытăнса 19 сехетчен тин кăна пĕçернĕ çăкăр кăна мар, апат-çимĕç таварĕсем: макарон тата кондитер изделийĕсем, кĕрпесем тата ыттине те туянма пулать. Çаплах кунта нефтьпе газ кăларакан “Нурлатнефть” управленин ОРСĕнчен кашни кун ирхине сĕт тата хăйма илсе килеççĕ.

# Шанăça çухатмасть



**Февралĕн 14-мĕшĕнче Ульяновск облаçĕнчи Димитровград хулинче поэт, художникăн Гакиль Сагировăн 60 çулхи юбилейне паллă турĕç. Юбилее халалланă уява Ульяновск облаçĕнчен çеçмар, Самар, Тольятти, Хусан, Нурлат хулисенчен те хăнасем килнĕччĕ. Уяв хулари чи пысăк "Восход" культура çуртĕнче иртрĕ. Пирĕн ентешсен ятĕнчен Гакиль Сагирова саламлама Нурлат районĕпе хулин администрацийĕн представителĕ Ф.Р.Ногуманова, РОО ĕçченĕсемпе шкулсен учителĕсем, районти пултарулăх артисчĕсем тата унăн талантне хисеплекенсем пынăччĕ.**

## Уяв умĕн

**Культура çурчĕн алăкĕ çине юбилей пуласси çинчен пысăк пĕлтерÿ çакса хунăччĕ, фойере вара Гакиль Сагировăн ÿкерчĕкĕсене вырнаçтарнăччĕ. Уяв хуçисем Хусан хулинчи çыравçăсен ушкăнне тивĕçлипе кĕтсе илчĕç. Часах Гакиль Сагирова хăйне те илсе килчĕç. Фойере поэт хăнасемпе калаçрĕ.**

## Творчествăна халалланă ода

Сцена çинче хăнасем чылайччĕ, чечексем питĕ нумайччĕ, чи варринче вара - Гакиль пичче Пуçтараннисем хушшинче тĕрлĕ наци çыннисем пурччĕ: вырăссем, тутарсем, еврейсем, тĕрлĕ професси представителĕсем, тĕрлĕ рангри ертÿçĕсем, çав шутра хулапа облаçсен администрацийĕсен пуçлăхĕсем, Самар облаçĕн вице-губернаторĕ, Куйбышев дистанци чугун çул начальникĕ, Ульяновск облаçĕн Законодательнăй пуху депутачĕсем, тĕн çыннисем, вулăс председателĕсем, тутар халăхĕ, шкулта вĕренекенсем, пултарулăх артисчĕсем, Димитровград хулинче пурăнакансем.

Идеал Галяутдинов уява уçса, çыравçăн пурнăçĕ çинче чарăнса тăчĕ. Димитровград - Сагиров халь пурăнакан вырăн, Файзулово ялне поэт хăйĕн иккĕмĕш тăван енĕ тесе шутлать, Ахметкино вара - çуралнă тăван ялĕ. Çав кун юрланă "Тăван Ахметкино" юрă шăпах çавăн çинченччĕ.

Уявра Гакиль Сагиров адресĕпе ырă, саламлă сăмахсем нумай каларĕç. Тухса калаçакансем пурте, академик-и вăл, ученăй-и, е политик - хăйсем çак çыннăн хастарлăхĕпе чăтăмлăхĕнчен, 3 çулта ашшĕсĕр тăрса юлнине тата 21 çулта вара пачах та çÿрейми пулнине пăхмасăр, шанăça çухатманнинчен, çынсене юратнинчен тĕлĕннине пĕлтерчĕç. Поэта саламлакансем пурте ăна парнесем пачĕç. Сагировăн çывăх тăванĕсемпе юлташĕсем валли спонсорсен вăйĕпе уяв сĕтелĕ хатĕрленĕччĕ. Çав кун Гакиль пиччене Ульяновск облаçĕн администраци тата губернатор ятĕнчен Хисеп грамоти пачĕç, çаплах Гакиль Сагиров творчествине пулăшас тĕллевпе фонд йĕркелени çинчен пĕлтерчĕç. Тутарстанти Писательсен союзĕн председателĕ Гакиль пиччене республикăри 250 çыравçă алă пуснă саламлă адрес тата Тутарстанти Писательсен союзĕн членĕн çĕнĕ билетне пачĕ.

Хусанти патшалăх университечĕн тутарпа хĕвелтухăç чĕлхисен филологи факультечĕн деканĕ, пирĕн ентеш, академик, писатель Талгат Галиуллин КГУ ректорачĕ Г.Сагирова çак факультетăн уйрăмне вĕренме йышăнни çинчен пĕлтерчĕ.

Пирĕн ентешсен ятĕнчен юбиляра район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Ф.Н.Ногуманова саламларĕ. Ырă салам сăмахĕсем хыççăн Флюра Рашидовна çапла каларĕ:

- Сирĕн тăван енĕрте творчествăн çĕнĕ ăнаçлăхĕсене кĕтеççĕ, кунта сире тата. сирĕн хисеплĕ аннĕр, Хабибзямал валли çĕнĕ хваттер яланах хатĕр.

Унтан вăл Гакиль пиччене Нурлат районĕн тата хула администрацийĕн, районти вĕрентÿ пайĕн, районти хаçат редакцийĕн, шкулсен, ача сачĕсен тата уйрăм граждансен ятĕнчен парнесем пачĕ. Пуçтараннисене пирĕн пултарулăх артисчĕсем хăйсен ăсталăхĕпе савăнтарчĕç. Гакиль пичче уяв иртерме пулăшнăшăн пурне те тав турĕ.

Уява йĕркелекенсем çулсерен çулла Гакиль Сагирова халалланă ятарлă кун иртterме сĕнÿ пачĕç, Гакиль пичче çулла хăйĕн чĕрине çывăх Ахметкинăпа Файзулово ялĕсенче канма юратнине шута илсен, эпир те çак уявран аяккинче тăрса юлмăпăр.

## Пĕр çемьери пек

Питĕ шел, çапах та поэтăн амăшĕ, Хабибзямал аппа хăйĕн сывлăхне пула уява хутшăнаймарĕ. Март уйăхĕн вĕçĕнче вăл 83 çул тултарнине те шута илмелле. Паллах, вĕсем Гакильпе иккĕшĕ кĕçĕн ывăлĕ Наиль, Халида кинĕ тата хаклă мăнукĕсем пулăшмасăр пурăнаймастчĕç. Наиль пĕр пысăк организацие ертсе пырать, Халида та ертсе пыракан специалист пулса ĕçлет, вĕсен ывăлĕсем 11 тата 8 классенче вĕренеççĕ (аслă ывăлĕ - моряк, аякра пурăнать, çемьеллĕ, Гакиль пиччене час-часах çырусемпе савăнтарать). Çак ырă та çынна юратакан, ăнланакан çемье ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăрать. Икĕ çемье кÿршĕллех пурăнать, çавăнпа мăнукĕсем ирирех асламăшĕпе Гакиль пиччĕшне пулăшма, тутлăрах çитерме васкаççĕ. Халида аппа каласа парать:

- Пĕррехинче, ачасем пĕчĕккĕрех чухне, вĕсенчен пĕри апат леçсе пама маннă, ĕçрен килсен эпĕ çакна пĕлсе хурланса макăрса ятăм. "Ватăлсан мана та пăхмăр-ха эсир", - терĕм ачасене. Çакăн пекки урăх пулмарĕ. Асламăшĕпе пиччĕшне пăхасси вĕсемшĕн çырман закон пулса тăчĕ. Иккĕмĕш ывăлĕ Ришат, Гакиль пиччен сăввисене кĕвĕлекенскер, темиçе çул ĕнтĕ çуллахи каникул вăхăтĕнче вĕсене Файзулловăра пăхать, кирлĕ пулсан машинăпа илсе çÿрет, кĕркуннепе çуркунне коляскăпа уçăлма илсе тухать, мĕнле пысăк ырă ĕç тунине хăй те пĕлсе çитерейместпулĕ вăл...

* * *

***Юбилей уявĕ вĕçленчĕ. Чун-чĕрере вара канăçсăрлăх. Шавлă уяв хыççăн Гакиль пичче хăйĕн сăввисемпе тата шухăшĕсемпе пĕччен юлмĕ-ши? Паян унăн пичетленмен сăввисем икĕ пухăлăх. Тата çырмалли мĕн чухлĕ чĕринче. Поэт пурăнать, çырать. Унăн пурнăçĕнчи кашни кун - хастар çыннăн тивĕçлĕ пурнăçĕшĕн кĕрешни, эпир ун умĕнче пуçа таятпăр.***

**К.ЯМАЛЕТДИНОВА.**




Çуралнă кунне асăнса

## Ачасен сăвăçи- МИТТА ВАÇЛЕЙĔ

Мартăн 5-мĕшĕнче Чăвашсен паллă поэчĕ Митта Ваçлейĕ çуралнăранпа 90 çул çитет. Ача-пăча литературинче те Митта Ваçлейĕ хăйĕн ăсталăхĕпе хисеплĕ вырăн йышăннă. Çамрăк чухне хăй те шкулта ĕçленĕскер, пĕчĕк туссем валли пайтах сăвăсем çырнă. Çав вăхăтрах Пушкин, Чернышевский, Добролюбов, Толстой, Горький, Есенин, Гейне тата ытти çыравçăсен произведенийĕсене чăвашла куçарнă. Тутар поэчĕпе Хасан Туфанпа питĕ юлташлă пулнă. 1930 çулсенче, радиокомитетра ĕçленĕ чухне, Митта Ваçлейĕ ачасем валли ятарлă кăларăмсем те йĕркеленĕ.

## Конкурсра палăрнă

Çак кунсенче Мускавран Шупашкара ырă хыпар çитнĕ: Чăваш кĕнеке издательстви кăларнă икĕ кĕнеке иртнĕ çул РФ пичет енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕ ирттернĕ "Кĕнеке кăларассин ăсталăхĕ" ятлă конкурсра малти вырăнсене çĕнсе илнĕ. Пĕррремĕш кĕнеки - вырăс шкулĕсен 4-мĕш класĕнче вĕренмелли "Чăваш сăмахĕ". Ăна Нина Черновăпа Валентина Игнатьева хатĕрленĕ. Вăл шкулта вĕренмелли кĕнекесем хушшинче III степеньлĕ диплом çĕнсе илнĕ.

Иккĕмĕшĕ - тĕрлĕ тĕслĕ "Чувашия" фотоальбом (редакторĕсем - Лидия Кубашинăпа Алексей Павлов, художникĕ - Галина Самсонова). Вăл II степеньлĕ диплом илме тивĕçлĕ пулнă. Альбомра Чăваш Енĕн паянхи пурнăçне туллин çутатса панă. Вăл ЧР Президенчĕн Николай Федоровăн саламлă çырăвĕпе - умсăмахпа уçăлать. Кĕнекери çĕр-çĕр фото хушшинче чăвашсен ятлă-сумлă çыннисем: академиксемпе профессорсем, çĕр çыннисемпе рабочисем, учительсемпе врачсем, писательсемпе художниксем тата ыттисем те. Чăваш Енĕн авалăхĕ çинчен В.Д.Дмитриев академик тĕплĕ çырса кăтартнă.

Çакна каламалла: иртнĕ çул Чăваш кĕнеке издательстви 60 ытла кĕнеке кăларнă.

**П.АЛЕКСЕЕВ.**

# Активлӑха ӳстермелле

Ӗҫлекенсен пурнӑҫ тата сывлӑх хӑрушсӑрлӑхне тивӗҫтересси - кӑткӑс та нумай профиллӗ система. Унта право, социаллӑ пурнӑҫпа экономика, санитарипе-гигиена, сиплевпе профилактика, реабилитаци тата ытти мероприятисем кӗреҫҫӗ, вӗсене йӗркелес тӗлӗшпе питӗ тимлӗ пулмалла.

Ҫулталӑк итогӗсене пӗтӗмлетес тӗлӗшпе ирттернӗ пӗрлехи пухура шӑп кӑна ҫакна шута илсе, "Нурлатнефть" НГДУра ку системӑна кулленхи пурнӑҫа кӗртме чӗнсе каларӗҫ.

- Ӗҫлеме лайӑх условисем туса парас тата ӗҫре йӗрке тытас тӗлӗшпе социаллӑ пурнӑҫпа экономика, йӗркелӳпе техника мероприятийӗсен комплексне пурнӑҫлатпӑр, - тесе палӑртрӗ хӑйӗн докладӗнче НГДУн тӗп инженерӗ Р.А.Сафиуллин.

Докладчик хӑйӗн калаҫӑвне пуҫласа "Татнефть" АОн структурӑллӑ подразделенийӗсемпе уйрӑлнӑ предприятисенче ӗҫре суранланнине, авари тата пушар хӑрушсӑрлӑхӗн шайне тишкерсе тухрӗ, кайран вара НГДУ ӗҫ сыхлавӗпе хӑрушсӑрлӑх техники тӗлӗшпе ирттерекен ӗҫсем ҫинче тӗплӗн чарӑнса тӑчӗ.

Управленире 1997 ҫулта ӗҫ условийӗсене лайӑхлатас тӗллевпе 1 миллиард та 564 миллион тенкӗ тӑкакланӑ. Ятарлӑ тумтир, атӑпушмак тата уйрӑм хӳтлӗх хатӗрӗсем 1 миллиард та 115 миллион тенкӗлӗх туяннӑ. Ятарлӑ апатланушӑн тата ятарлӑ ҫусемшӗн 369 миллион тенкӗ тӑкакланӑ.

Ӗҫ сыхлавӗн хӑшпӗр ҫӗнӗ Правилисемпе Положенийӗсене ӗҫе кӗртнипе ертсе пыракансене, специалистсене, рабочисене вӗрентес тата пӗлӗвӗсене тӗрӗслес, ҫаплах технологи процесне ирттерес тата оборудованилес, кирлӗ требованисемпе килӗшӳллӗн инструкцисем ирттерес тӗллевпе пысӑк калӑпӑшлӑ ӗҫ пурнӑҫланӑ.

Ӗҫ сыхлавӗ тӗлӗшпе пурнӑҫлакан ӗҫсенчен пӗри - ӗҫ вырӑнӗсене учета илесси тата аттестацилесси, ҫакна тӗпе хурса, вӗсене реализацилесси. Управленире аттестацилекен тӗп комисси йӗркеленӗ, цехсемпе подразделенисенче те комиссисем пур. Кунти требованисем ҫакӑн пек: ӗҫ вырӑнне хак парассине комплекслӑ пӑхмалла, комисси пӗтӗмлетнипе конкретлӑ мероприятисем ӗҫлесе хатӗрлемелле. Ӗҫ вырӑнӗсене рационализацилессипе ҫӗнӗ техника планпа хута яма, технологи процесӗсене, ӗҫе йӗркелессине тата условисене лайӑхлатма пӑхса хӑварнӑ. Тата строительство...

Ҫӗнӗ объектсене техника хӑрушсӑрлӑхӗн стандарт требованийӗсемпе килӗшӳллӗн, киввисене реконструкцилесе тумалла. Ҫапла, юлашки икӗ ҫул хушшинче 1-мӗш ЦДНГ валли ку чухнехи шайпа килӗшсе тӑракан база, пысӑк кӳкӗртлӗ нефть ӗҫлесе хатӗрлекен участок (УПВСН), Кутушири нефтьпе пуян вырӑнта хӗсекен насус станцийӗ (1-мӗш ДНС). Кашни объектра ӗҫлеме йӗркеллӗ условисем туса параҫҫӗ. Парафин тумалли установкӑра кивӗ котельнӑя ҫӗннипе улӑштарнӑ, кунта вӑй хуракан операторсен ӗҫ условийӗсем те лайӑх.

Ӗҫ условийӗсене лайӑхлатас тӗллевпе те сахал мар тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫапла, УТТра токарнӑй тата аккумулятор цехӗсенче вентиляци хӑватлӑхӗсене ӳстернӗ. Тата ытти чылай ӗҫсем пурнӑҫланӑ.

Столяр мастерскойӗнчи строительствӑпа монтаж цехӗнче йывӑҫа ӗҫлесе хатӗрлекен станоксемпе ӗҫленӗ хыҫҫӑн юлакан пӑчкӑ кӗрпине пухмалли установка лартнӑ. Ҫакӑнтах, растворпа бетон узелӗнче, хушма вентиляци вырнаҫтарнӑ. Ҫакӑн пек ӗҫсем ҫинчен тата та ҫырма пулать, вӗсене кашни цехрах туса ирттернӗ.

Ҫав вӑхӑтрах управленире сиенлӗ веществосемпе факторсем нормӑран та иртнӗ ӗҫ вырӑнӗсем пур. "Татнефтегаз" лабораторийӗн тӗпчевӗсем кӑтартнӑ тӑрӑх, ҫак специальноҫсен ӗҫ вырӑнӗсем сиенлисен шутне кӗреҫҫӗ: бетонщиксем (цемент тусанӗ), столярсем (йывӑҫ тусанӗ), алӑпа туптакан тимӗрҫӗ (шав), компрессор установкин машинисчӗ (шав) тата нефть кӑларакансем.

Шел пулин те, нефть кӑларассинчи мӗнпур сиенлӗ факторсене пӗтерме май ҫук, ҫакна нефтяниксем пӗлеҫҫӗ. Сиенлӗ условисенче ӗҫленӗшӗн вӗсене хушма отпуск, йӳнерех хакпа апатланма компенсаци, сӗт параҫҫӗ.

- Ҫапах та ҫакӑ пире лӑплантараймасть. Пирӗн задача - мӗнпур ӗҫченсен ӗҫ условийӗсене лайӑхлатасси, - терӗ докладчик. Хӑрушсӑрлӑх техники енӗпе ӗҫлекен тӗп инженерӑн ҫумӗ В.М.Коннов НГДУ пурнӑҫӗпе ӗҫӗнчи тӗслӗхсемпе фактсем илсе кӑтартса, ҫакӑн ҫинченех каларӗ.

Конференцие Лениногорскри сӑрт-тупа техника инспекцийӗн патшалӑх инспекторне Р.Н.Фарукшина, 73-мӗш ПЧ начальникӗн ҫумне Н.И.Сулейманова чӗннӗччӗ. Вӗсем НГДУпа тахҫанах ҫыхӑну тытаҫҫӗ, ӗҫ сыхлавне йӗркелессинчи, пушар хӑрушсӑрлӑхӗнчи лайӑх тата япӑх енсене лайӑх пӗлеҫҫӗ. Тухса калаҫса вӗсем лайӑх тӗслӗхсем те, япӑххисене те илсе кӑтартрӗҫ, йӗркене пӑсассине чарассипе ҫыхӑннӑ ӗҫсене вӑйлатмалли ҫинчен чӗнсе каларӗҫ.

Кирек мӗнле коллективри пекех, Нурлатри нефть кӑларакансен те йывӑрлӑхсем сахал мар. Промыслари скважинӑсен шучӗ ӳсет, штат расписанийӗ вара малтанхиех - пӗр оператор-обходчика 30-35 скважина тивет, ҫакӑ нормӑран икӗ хут ытла, ҫавӑнпа та ӗҫ пахалӑхӗ япӑхланать. Ҫакӑ 1-мӗш ЦДНГ начальникне А.Н.Саватникова пӑшӑрхантарать.

Хӑйӗн калаҫӑвӗнче вӑл производство культурине ӳстерес ӗҫе вӑйлатассине тимлӗх уйӑрчӗ.

Скважинӑсене ҫӗр айӗнче юсакан цех начальникӗ Н.Г.Шафиков финанс йывӑрлӑхӗсене пула "Анкат" газоанализаторсемпе ҫителӗклӗ тивӗҫтерме май ҫукки ҫинчен каларӗ.

УТТӑн тӗп инженерӗ Х.А.Салахов управлени виҫӗ ҫул хушши ҫул ҫинчи тата производствӑри инкексемсӗр ӗҫленине палӑртса, автомашинӑсене ӑшӑ шывпа ҫумалли цех тӑвассине, Андреевка промыслине тивӗҫтерекен автотранспорт колоннинче автозаправка тӑвассине хӑвӑртлатасси ҫинчен пӑшӑрханса каларӗ.

Профком председателӗ О.Н.Лизунов администраципе профкомӑн пӗрлехи комитечӗн ӗҫне тишкерсе тухрӗ. Вӑл сӗннипе конференци йышӑнӑвӗ ҫумне ҫакӑн пек хушу кӗртрӗҫ: кӑҫалхи февраль уйӑхӗнче "Тутарстан Республикинчи ӗҫ сыхлавӗ ҫинчен" Закона мӗнпур цехсемпе подразделенисенче пӑхса тухассине йӗркелемелле.

**В.БУРАЙКИН.**
**Нурлат хули.**



*Резеда Ильдусовна Камаева учительсен династийӗнчен. Вӑл ашшӗпе-амӑшӗн, Кульбаево-Марасари вӑтам шкул педагогӗсен ҫулӗпе кайнӑ. Амӑшӗ Накия (халь вилнӗ ӗнтӗ) тата ашшӗ Ильдус Хайрутдиновсем кунта ӗҫлесе пысӑк стаж пухнӑ. Резеда педагогика институтӗнчен вӗренсе тухнӑ та акӑ 10 ҫул ытла ӗнтӗ Ҫӗнӗ Элметри вӑтам шкулта физикӑпа математикӑна вӗрентет, класс руководителӗн тивӗҫӗсене те пурнӑҫлать. Вӑл тӗрӗс ҫул суйласа илни пирки иккӗленмелли ҫук. Унӑн урокӗсенче яланах интереслӗ, вӗренекенсемпе учительсем Резеда Ильдусовнана предмета лайӑх пӗлнӗшӗн, ӑслӑ пулнӑшӑн хисеплеҫҫӗ. Вӑл "Ӑслӑ учитель" ята тивӗҫ пулнӑ.*

*Резедан мӑшӑрӗ - Ильхам Адипович та ҫак шкултах вӑй хурать, ҫапла майпа учитель ӗҫӗ вӗсемшӗн ҫемье профессийӗ пулса тӑнӑ.*

*Ӳкерчӗкре: Ҫӗнӗ Элметри вӑтам шкул учительници Р.И.Камаева.*

# Пурӑн, фестиваль!

Фольклор фестивалӗсем ирттерессине районта 1990 ҫултан пуҫласа 1995 ҫулччен ӗҫленӗ ҫамрӑк туристсен районти станцийӗ пуҫарнӑ.

Ҫулсерен лайӑхланса пыракан программӑллӑ фестиваль тӑвӑр коридорсенчен (учрежденийӗн хӑйӗн ҫурчӗ пулман) чугун ҫул ӗҫченӗсен клубне куҫнӑ.

Майӗпен ҫак мероприятие нумайӑран та нумайрах ача хутшӑннӑ май ӑна районти культура ҫуртӗнче ирттерме тытӑннӑ.

Организацие хупнӑ хыҫҫӑн ку ӗҫе ачасемпе ҫамрӑксен центрӗ малалла тӑснӑ. Фольклор уявӗн программи кӗскелнӗ пулин те, унӑн содержанийӗ ҫавах юлнӑ: "Фольклото" (ку мероприяти ҫакӑн пек ятлӑ) ку е тепӗр халӑхӑн йӑлийӗркисене тӗпчет. Кӑҫалтан вара ҫак мероприятие нумай ача хутшӑнтарас тата унӑн содержанине пуянлатас тесе ҫамрӑк туристсен станцийӗн опычӗпе усӑ курма пуҫланӑ. Паллах ӗнтӗ, ҫав вӑхӑтрах чылай хушусем те кӗртнӗ.

Пӗрремӗш хут лайӑхах пулмасть, теҫҫӗ пулин те, ҫак фестиваль ҫинчен ачасемпе ҫамрӑксен центрӗн ӗҫченӗсем ун пек калама пултараймаҫҫӗ. Чи малтан фольклор уявне хутшӑнма районти 20 шкул коллективӗ килнине палӑртса хӑвармалла. Тӑватӑ сехет хушши жюри членӗсемпе куракансем тутар, вырӑс, чӑваш чӗлхисемпе иртекен программӑна ҫав тери интересленсе курчӗҫ. Чи лайӑххи виҫҫӗмӗш номерлӗ шкул коллективӗ пулчӗ. Т.И.Чибидина ертсе пыракан фольклор коллективӗ унччен те хӑйне кӑтартма ӗлкӗрнӗ, ӑна нумайӑшӗ пӗлеҫҫӗ. Татьяна Ивановна программӑна хӑйӗн тӑван енӗн - Зузеевӑпа Селенкӗш ялӗсенче пурӑнакансен пурнӑҫӗнчи йӑла-йӗркисене кӗртнӗ. "Россияне" "Хӗр ҫураҫни" композиципе ҫеҫ лӑпланмарӗ, ҫаплах наци тӗрлӗ уявсенчи сюжетсене те кӑтартрӗ. Юрӑсем мӗнле хавхаланса шӑрантарчӗҫ! Жюри пӗр иккӗленмесӗр вӗсене пӗрремӗш вырӑн пачӗ. Ҫак шкулӑн иккӗмӗш коллективӗ "Улах" хатӗрленӗччӗ. Вӗсене те тӑвӑллӑн алӑ ҫупса кӗтсе илчӗҫ. "Камыр-батыр" коллективӗн "Каҫхи вӑййӑсем", Ҫӗнӗ Иглаелӗн тата Хумаел шкулӗсен "Улах" сценкисем те куракансене питӗ килӗшрӗҫ. Ахальтен мар ӗнтӗ ҫак тӑватӑ коллектив малти вырӑнсене йышӑнчӗ.

Вырӑс коллективӗсем суйласа илнӗ темӑсем те требованисемпе килӗшсе тӑчӗҫ. Андреевкӑри шкул коллективӗ фольклор уявне темиҫе композици хатӗрленӗччӗ, вырӑс халӑх юррисене юрларӗ, вӗсем "Россияне" пекех пӗрремӗш вырӑн йышӑнчӗҫ. Хулари 2-мӗш тата 1-мӗш номерлӗ, Пӳлеркӳл шкулӗсене те уйрӑм палӑртса хӑварчӗҫ. Юлашкисем ӗлӗкхи фольклорпа хальхине танлаштарчӗҫ. Анчах та мероприятие хутшӑннисем хушшинче фольклор пӗлтерӗшне тӗрӗс ӑнланманнисем те пурччӗ. Вӗсем пӗр юрӑ юрланипе, "Улах" композицин пӗр элементне кӑтартнипех ҫырлахрӗҫ. Фестивале хутшӑннӑ коллективсенчен ҫуррине яхӑн "Улах" композици хатӗрленӗ. Урӑх тема суйласа илме май пулман-им?

Фестиваль иртсе кайрӗ. Вӑл сцена ҫинчи ачасене ҫеҫ мар, куракансене те интереслентерчӗ. Паллах, унӑн усси те пур. Ачасем ӗлӗкхи наци тумӗсемпе, йӑла-йӗркесемпе паллашрӗҫ, сцена ҫинче кӑтартакансен артистла пултарулӑхӗнчен тӗлӗнчӗҫ.

Малашне те фестиваль ҫапла интереслӗ иртмелле пултӑрччӗ.

**З.АХСАНОВА,**
**КГУ студентки.**

## БАСКЕТБОЛ

*Спорт*** Спорт *** Спорт*

Январĕн 21-мĕшĕнче районти шкулсем хушшинче ачасемпе çамрăксен клубĕнче баскетбол вăййин финал ăмăртăвĕсем пулса иртрĕç. Яшсенчен пĕрремĕш вырăна иккĕмĕш шкул команди çĕнсе илчĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Тĕрнеçри тата Чулпанти вăтам шкулсен командисем йышăнчĕç. Хĕрсем хушшинче пĕрремĕш вырăна хулари пĕрремĕш шкул команди тухрĕ. Иккĕмĕш вырăна Иглаелĕнчи шкулта вĕренекенсем йышăнчĕç, виççĕмĕшне - Анат Чаллăри шкул команди.

Февралĕн 6,10-мĕшĕсенче çĕнтерӳçĕсем Пăлхарта пулса иртнĕ зонăри ăмăртусене хутшăнса Нурлат чысне хӳтĕлерĕç. Кунта пирĕн хĕрсем уйрăмах ăнăçлă выляреç, вĕсем иккĕмĕш вырăн йышăнчĕç. Командăри пилĕк хĕр - Т.Климова, Я.Мазитова, Р.Шакирова, И.Спасова, Р.Абзалимова хулари пĕрремĕш шкулта вĕренеççĕ, иккĕшĕ - Т.Иткина, Л.Тямаева - иккĕмĕш шкулта. Татьяна Климована чи лайăх хӳтĕлекен, вылякан тата тĕл перкен тесе йышăнчĕç, ăна харăсах виçĕ приз пачĕç. Яшсем тăваттăмĕш вырăн йышăнчĕç. Хулари иккĕмĕш шкулта вĕренекен К.Михайлова чи лайăх вылякан тата тĕл перкен тесе йышăнчĕç.

## Йĕлтĕр

Февралĕн 8-мĕшĕнче ДЮКФП филиалĕсем хушшинче йĕлтĕр спорчĕн ăмăртăвĕсем иртрĕç. Пĕрремĕш вырăна ДЮКФП команди тухрĕ. Пухтелĕнчи шкул команди иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ, виççĕмĕш вырăна - Анат Чаллăри шкул, тăваттăмĕшне - хулари 4-мĕш номерлĕ шкул. Яшсем хушшинчи уйрăм ăмăртура пĕрремĕш шкулта вĕренекенсем çĕнтерчĕç. Е.Яковлев пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ, В.Емелин - иккĕмĕш вырăн, виççĕмĕш вырăнта - тăваттăмĕш шкулти И.Сайфутдинов. Хĕрсем хушшинче Пухтелĕнчи М.Макарова пĕрремĕш вырăна тухрĕ, иккĕмĕшне - Анат Чаллăри А.Краснова, виççĕмĕш вырăна - тăваттăмĕш шкулта вĕренекен Д.Дормидонтова.

Февралĕн 16-19-мĕшĕсенче пирĕн йĕлтĕрçĕсем Пĕкĕлме хулинче иртнĕ зонăри ăмăртусене хутшăнса улттăмĕш вырăн йышăнчĕç. Çитес вăхăтра Заинск хулинче иртекен ăмăртусене кайма шутлатпăр.

Хальхи вăхăтра хулари шкулсем хушшинче тата кустсенче хоккейпа волейбол вăййисен ăмăртăвĕсем пыраççĕ.

**А.НАБИУЛЛИН,**
**ДЮКФП тренерĕ.**

---

* И.Я.Яковлев çуралнăранпа 150 çул çитнĕ май

### Чăваш улăпĕ

Вăл çырулăх тăвакан,
Алфавит йĕркелекен,
Пур чăвашшăн паллă ят
Иван Якăлччă - хăват.

Уçнă Яковлев шкулсем-
Çутта тухнă чăвашсем.
Чăвашăн институтне
Панă Яковлев ятне.

Шупашкарта асăнса,
Ăслая хисеплесе,
Палăк лартнă гранитран
Тусăм, эс ăна ан ман!

**Лена УЛАЕВА.**
**Еревьел ялĕ.**

---

## *Халап конкурсĕ*

Нумаях пулмасть хулари 3-мĕш номерлĕ шкулта пуçламăш классенче вĕренекенсем хушшинче чи лайăх халап кăтартас тĕлĕшпе конкурс пулчĕ. Çак мероприятие ирттерессишĕн Татьяна Викторовна Михайлова яваплăччĕ.

Ачасем хăйсен учителĕсемпе пĕрле тĕрлĕ халапсенчи интереслĕ сценкăсем хатĕрлерĕç, конкурса килнĕ хăнасен вара çак сценка мĕнле халапран пулнине пĕлмеллеччĕ. Пĕчĕк артистсем тăрăшса хатĕрленнĕччĕ: декорацисем тунă, костюмсем çĕленĕ, рольсене вĕреннĕ, çавăнпа та ачасем халапсене хăвăрт тата çăмăллăн пĕлчĕç.

Кĕске вăхăт хушшинче ачасем "Кушак пӳрчĕ", "Пуртă пăтти", "Пучах", "Кашкăрпа тилĕ", "Тилĕпе мулкач" халапсенчи сăнарсемпе тĕл пулчĕç.

Пĕчĕк артистсем хумханчĕç пулин те, лайăх выляреç, сăнарсен кăмăл-туйăмне, характерне ăста кăтартрĕç.

Кашни ача хăйне еверлĕ пултаруллă. Çак пултарулăха уçса пама условисем çеç кирлĕ тесе ахаль каламаççĕ çав.

**О.ЕФРЕМОВА.**

---

## Саламлатпăр!

Лачака ялĕнче пурăнакан юратнă аппана **Анна Тудьяровна САНДРЮХИНАНА** 70 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, канлĕ ватлăх сунатпăр.

*Тав тăватпăр сана чĕререн,*
*Саламлатпăр савса çемьерен.*
*Ăшшуна-çке паратăн чунтан,*
*Эсĕ хаклă пире ылтăнран.*



**Сидуллинсемпе**
**Долговсем тата тăванĕсем.**

---

*Улах юррисем*

## Ирхине тăтăм та - пит ир пулчĕ

Чĕмпĕртен те илтĕм чĕчĕ тихи -
Ут пулĕ теекен пĕри çук.
Пуçăмах та çамрăк, чунçăм айван -
Çын пулĕ теекен пĕри çук.

Хура вăрман витĕр тухнă чухне
Хура та çĕр çинче çĕр каçрăм.
Мĕнпур шухăшăмсем аса килсен,
Каллĕ-маллĕ утса çĕр каçрăм.

Лапка кăна лапка шур юр çăвать,
Мĕнпур тавралăха шуратать.
Аттепе аннерен çамрăк юлсан,
Юн пек хĕрлĕ сăнăм шуралать.

Ирхине тăтăм та - пит ир пулчĕ,
Пирвайхи автан тĕлĕ пулчĕ.
Анне кăкри сĕтне панă чухне
Мĕнпур курнă ырлăх çав пулчĕ.

Хура вăрман хĕрне путек ятăм,
Куян тесе персе ан илĕр.
Хăвăр лайăхăрпа мухтансан та
Мана ытла хытă ан калăр.

Шурă юрĕ çăвать те, каять те,
Хура çĕрсем нихçан та каймаççĕ.
Калаканни калать те, манать те,
Илтекенсем нихçан манмаççĕ.

**Пухса йĕркелекенĕ Е.Илюшкина.**

---

## *Фестиваль, фестиваль...*

Тутарстан Республикин министрсен Кабинечĕн постановленине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе Тутарстан Республикин ачасемпе тата çамрăксемпе ĕçлекен патшалăх комитечĕ, "Татарстан" ГТРК, çамрăксен пултарулăх пĕрлешĕвĕсен наци ассоциацийĕ Тутарстан Республикинчи çамрăксен художество пултарулăхĕн пĕрремĕш фестивальне ирттереççĕ, вăл çулталăк хушшинче пулса иртĕ. Фестиваль результачĕсемпе çĕнтерӳçĕсене çулталăк вĕçĕнче премисем парĕç. Фестивале ĕлкенлĕх тата илемлĕх конкурсĕ уçĕ, вăл çак номинацисемпе иртĕ: "Тутарстан Республикин чи лайăх модельер-дизайнерĕ", "Тутарстан Республикин чи лайăх парикмахер-стилисчĕ", "Тутарстан пики-98". Çак конкурс "Ильдан" фирмăн "Лик" мода театрĕпе пĕрле пулать. Юлашки шоура Раççейри мода мэтрĕ В.Юдашкин çĕнĕ коллекципе хутшăнĕ.

Фестивале Тутарстан Республикин икĕ патшалăх чĕлхипе ирттереççĕ.

### Илемлĕх тата ĕлккенлĕх конкурсĕ - "Тутарстан пики"

Конкурса 16-23 çулхи хĕрсем хутшăнма пултараççĕ, ӳт-пӳ енчен илемлĕ (90-60-90 виçесене çывăхрах), 175 сантиметр çӳллĕшрен кая мар пулмалла. Хĕрсен илемлĕ калаçма пĕлмелле, шухăшлав пултарулăхĕ пулмалла.

### Художник-модельерсен конкурсĕ

Конкурса çамрăк та пултаруллă художниксем хутшăнма пултараççĕ, вĕсен пĕр темăпа çыхăнакан 3-рен пуçласа 6 моделе таран тумтир коллекцине кăтартмалла. Коллекци эстетика, технологи тата конструкци требованийĕсемпе килĕшсе тăмалла.

### Парикмахер-стилистсен конкурсĕ

Конкурса хальхи модăпа стиль çине уйрăм художествăпа эстетика енчен ăста, çамрăк та пултаруллă парикмахер-стилистсем хутшăнма пултараççĕ.

Конкурссен финалĕсем 1998 çулхи мартăн 2-мĕшĕнче Хусан хулинчи Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен оперăпа балет театрĕнче пулса иртĕç. Конкурса хутшăнас текен çамрăксене укçа-тенкĕ енчен хăйсем ĕçлекен организаци е предприяти пулăшасса шанатпăр.

**Район администрацийĕн çамрăксемпе ĕçлекен пайĕнче тĕплĕнрех ыйтса пĕлме пултаратăр. Телефон: 2-16-72.**

**Р.ЮСУПОВА.**

---

## ПĔЛТЕРӲСЕМ

**Хула варринчи пĕр пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Адрес: К.Маркс урамĕ, 6-53.**

* * *

**"Татнефть" акционер обществин привилегиллĕ, "А"категорилле акцийĕсене сутăн илетпĕр. Лицензи номерĕ 12-000-56-110000, Раççей Федерацийĕн ФКЦБ 1997 çулхи сентябрĕн 30-мĕшĕнче панă. Телефон: 2-19-46 (Модăсен ателйи).**

* * *

**Кăрмăш микрорайонĕнчи пĕр пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Телефон: 5-41-80.**

* * *

**Пĕччен пурăнакансене хваттер тара паратăп. Адрес: Советская урамĕ, 189-156 е 129.**

* * *

**1993 çулта туса кăларнă ВАЗ-21093 сутатпăр, бартер та пулма пултарать. Телефон: 2-15-59.**

* * *

**Пĕр пӳлĕмлĕ хваттере хушса тӳлесе икĕ пӳлĕмлипе улăштаратпăр. Телефон: 5-42-38.**

* * *

**60 лет Октября урамри 33 хваттерлĕ çурта тата Ленинградская урамĕнчи 36 хваттерлĕ çурта тунă çĕре пая кĕнисене Октябрь МСОн 1-мĕш ПМКине договорсене илсе пыма ыйтатпăр.**

**1-мĕш ПМК администрацийĕ.**

* * *

**Нурлат районĕнчи МПП ЖКХинче ĕçлеме ЮМЗ-6 КЛ трактор экскаваторщикĕ кирлĕ. Телефон: 2-21-71.**

**АТП çывăхĕнче приватизациленĕ 2 пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. 2-21-24 номерлĕ телефонпа 18 сехет хыççăн ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**1984 çулта туса кăларнă ВАЗ-2106 сутатпăр. Уксăмлă ялĕнчи Н.А.Абрамовран ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**Хула варринче магазин сутăнать. Телефон: (846-51) 5-19-16.**

* * *

**ГАЗ-31029 автомашина сутатпăр, хура тĕслĕ. Кăнтăрла 2-23-23, каçпа 2-16-93 номерлĕ телефонсемпе ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**1993 çулта туса кăларнă ВАЗ-21063 сутăнать. Адрес: Нефтяниксен урамĕ, 6-21, телефон: 5-15-27.**

* * *

**"Нурлат-Октябрь суту-илӳ базиˮ акционер обществи стройматериалсем, цинкланă тата витмелли тимĕр, ДВП, сăрăсем, савăт-сапа сутатпăр. Суту-илӳре çаплах икĕ камерăллă "Норд" холодильниксем пур, евродизайн, питĕ шанчăклă, хакĕсем йӳнĕ, тӳлевсĕрех леçсе паратпăр.**

**Япаласем тата апат-çимĕç сутакан пасарсенчи пирĕн магазинсене пырса курма сĕнетпĕр. Телефонсем: 2-11-24, 5-19-95, 5-43-49.**

* * *

**1996 çулта туса кăларнă ВАЗ-2106 сутатпăр. Телефон: 5-34-48.**

**Якуркелĕнчи кирпĕчрен тунă çĕнĕ çурта (30 сотка) сутатпăр е Нурлат хулинчи хваттерпе улăштаратпăр (вариантсем пулма пултараççĕ). Телефон: 2-24-13.**

---

Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 863.